27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АПРЕЛЬ
15
ШАМАТКУН
75(6570) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XII-мĕш пленумĕ

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн çак кунсенче пулса иртнĕ XII-мĕш пленумĕ «Комсомолăн шкулти ĕçĕсене лайăхлатмалли мерăсем çинчен» тата «Комсомолăн ялсенче çывăх вăхăтрах тумалли ĕçĕсем çинчен» сӳтсе-явса решенисем йышăннă. ВЛКСМ Центральный Комитечĕн пленумĕнче сӳтсе-явма лартнă ыйтусем комсомол организацисемшĕн, комсомолецсемшĕн тата пĕтĕм совет çамрăкĕсемшĕн питех те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Пленум решенийĕсем комсомол ĕçĕнчи кирлĕ ыйтусем çинчен калаççĕ. Вĕсенче çĕнни нумай. Вĕсем ВЛКСМ-ăн шкулсенчи тата ялсенчи организацийĕсен практикăллă ĕçне туса пыма нумай вăхăтлăха çул кăтартса параççĕ. Пленум решенийĕсене пурнăçа кĕртни партин помощникĕ, çамрăксен авангарчĕ, общественăллă ĕçсен нумай енлĕ шкулĕ пулса тăракан комсомолăн вырăнне татах та ытларах çĕклĕ. Вырăнсенчи парторганизацисен задачи—пленум решенийĕсене пурнăçа кĕртме комсомола пулăшасси пулать.

Совет шкулĕн пурнăçĕнче комсомол питех те пысăк тата ответлă вырăн йышăнса тăрать. Комсомол организацийĕн совет çамрăкĕсене çирĕп пĕлӳ пама, вĕсене Ленинпа Сталинăн аслă идейисем çинче воспитани пама учительсене пулăшмалла.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн пленумĕ «Çамрăк ăрăва вĕрентессишĕн тата воспитани парассишĕн государство умĕнче пĕтĕм ответлăха шкул тата çутĕç органĕсем тытнине, çав ĕçре вĕсем тĕп вырăн йышăнса тăнине» тата «Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсен тата çавăн пекех пионер организацийĕсен ĕçĕсем шкулта директорсемпе учительсем туса пыракан пĕтĕм воспитани ĕçĕн уйăрăлми пайĕ пулса тăнине» палăртрĕ.

Отечественнăй вăрçă пирĕн шкулшăн çирĕп тĕреслӳ пулса тăрать. Çав тĕреслĕве пирĕн шкулсем чыслăн тӳссе иртторчĕç. Совет шкулĕ пăхса ӳстернĕ нумай пин çамрăксем çапăçу хирĕсенче хастарлăн кĕрешнипе мухтава тухрĕç. Совет шкулĕ пăхса ӳстернĕ çамрăксем производствăра тата ялхуçалăхĕнче вăйа шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Пирĕн сĕршыв çамрăк ăрăвăн Зоя Космодемьянская тата Олег Кошевой пек представителĕсемпе тивĕçлипе мухталать. Вĕсене хăюллă та тӳрĕ кăмăллă пулма совет шкулĕпе комсомол пăхса ӳстернĕ. Димитрий Босый тата Екатерина Барышникова пек çамрăксемшĕн те эпир тулли кăмăлпа савăнатпăр. Вĕсем хăйсен примерĕпе нумай пĕлекен рабочи станок патĕнче ĕçлесе пысăк ĕçсене пурнăçа кĕртме пултарнипе, шкулта илнĕ пĕлӳпе комсомол панă политикăллă культура творчество тĕлĕшĕнчен вайлăн çĕклеме май панине кăтартса пачĕç.

Совет шкулĕ хăйĕн аталанăвĕнче çĕнĕ тапхăра пурăнса ирттерет. Вĕренӳ пахалăхне лайăхлатма тата вĕренекенсене воспитани парассине çĕклеме май паракан мероприятисене пурнăça кĕртнĕ. Арçын ачасемпе хĕрачасене уйрăмăн вĕрентмелле туни, шкулта вĕренме 7 çула çитнĕ ачасене илни, вĕренекенсен пĕлӳне тата вĕсем хăйсене мĕнле тыткаланине цифрăсемпе хаклани, çар ĕçне обязательнăй йĕркепе вĕрентни, «вĕренекенсем хăйсене тыткаламалли правилăсене» ĕçе кĕртни, — çаксем пурте шкула çĕнĕ те çӳллĕ пусăма çĕклеççĕ. Социализмлă ăмăртăва шкулти вĕренӳ ĕçне вырнаçусăр куçарни вĕренӳ пахалăхĕшĕн тата шкулти дисциплинăшăн систлĕ пулнă.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн пленумĕ комсомолăн шкулсенчи ĕçĕсене лайăхлатасси çине çавăрăнса пăхма кирлине палăртрĕ. Комсомолăн шкулсенчи хăшпĕр организацийĕсем халĕ те ĕнерхи кунпа пурăнаççĕ тата хăйсем тĕллĕн ĕçлеççĕ. Вĕсен ĕçĕсем пурнăçри ӳсе çивĕчленсе пыракан ыйтусенчен юлса пыраççĕ, унтан та ытларах, хăшпĕр чухне директорпа учительсем ертсе пыракан вĕренӳпе воспитани ĕçĕн тулашĕнче юлаççĕ. Вĕсем шкул ĕçне лайăхлатма çителĕксĕр пулăшаççĕ. Комсомол организацийĕ комсомолецсемпе вĕренекенсем умне лартакан ыйтусем çителĕксĕр пулаççĕ. Çавăн пек организаци шкулта вĕренӳвĕн пысăк пахалăхĕшĕн, çирĕп дисциплинăпа йĕркелĕхшĕн тата вĕренекенсене çирĕп воспитани парассишĕн пыракан кĕрешӳре хăйпе тивĕçлипе кăтартма пултарать-и-ха? Паллах, çук!

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн пленумĕ, шкулсенчи организацисен ĕçĕнчи ситменлĕхсене уçса палăртса, комсомолăн шкулти ĕçĕсене лайăхлатмалли мерăсене кăтартса пачĕ. «...Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсен тĕп задачи вăл учительсене вĕренӳпе воспитани ĕçĕсене тума пулăшасси, шкулта вĕренекенсене тӳрĕ кăмăллă, дисциплинăпа пăхăнма пĕлекен, пур енĕпе те малта пыракан, Тăван çĕршыв умĕнчи пур йыварлăхсене те, тĕреслӳсене те çĕнтерме, кирек мĕнле ĕçе те пурнăçа кĕртме хатĕр тăракан граждансем пулма пăхса ӳстернĕ çĕрте пулăшасси пулать».

Çакăнта пулать те ĕнтĕ комсомолецсен учитель умĕнчи тивĕçлĕхĕ тата хăйсен шкулти вырăнĕн ответлăхĕ. Комсомол организацийĕ учителе пур майсемпе те пулăшса пыма, унăн авторитетне çĕклеме тивĕçлĕ. Комсомолецсем хăйсен примерĕпе тăрăшса вĕренмеллине тата шкулти дисциплинăна çирĕппĕн пăхăнмаллине кăтартма тивĕçлĕ. Вĕсен шкул коллективĕн пурнăçне лайăх тата творчествăллă пурнăç тума тивĕçлĕ. Комсомолăн шкулсенче вĕренекенсен пурнăçĕнчи хăйĕн идейăллă, политикăллă, культурăллă пурнăçĕн организаторла рольне çĕклемелле.

Комсомолăн шкулсенчи çамрăксем хушшинчи ĕçне пирвайхи черетри, государствăшăн пысăк вырăн йышăнса тăракан ĕç вырăнне шутламалла. Ку ĕнтĕ комсомолăн ертсе пыракан органĕсем çине питех те пысăк ответлăх хурать. Вĕсен шкулсен ыйтăвĕсемпе, комсомолăн шкулти ĕçĕсен ыйтăвĕсемпе куллен ĕçлемелле. Центральный Комитетăн пленумĕ комсомол шкул енпе çавăрăнса тăма ыйтнине пур çĕрте те пĕтĕмпех пурнăça кĕртсе пымалла.

Комсомолăн Центральный Комитечĕн пленумĕн решенийĕ—комсомолăн шкулсенчи коллективĕсемшĕн ĕç программи пулса тăрать. Çав программăна пурнăça кĕртни комсомолăн шкулти ĕçĕсене татăклăнах лайăхлатма май парĕ.

Пленум комсомолăн ялсенче çывăх вăхăтрах тумалли ĕçĕсем çинчен йышăннă решени те питех те кирлĕ документ пулса тăрать. Вăл решенисем комсомолецсен ĕçне активлатассинчен вăл ĕçе аплăн çапса пырассинчен, ялти мĕнпур комсомолецсене ĕçе активлăн явăçтарассинчен тата вĕсем ялти çамрăксемпе çыхăнса тăрассине анлăлатса çирĕплетессинчен тухса тăраççĕ. Пленум комсомолăн ялти организацийĕсене хăйсен вырăнне — колхозлă ялта парти директивĕсене пурнăçа кĕртес ĕçри вырăнне çĕклеме хушать.

Мĕнпур çамрăксене 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен государство планне пурнăçа кĕртессишĕн, социализмлă çĕр ĕçне малалла аталантарассишĕн, фронтпа çĕршыва апат-çимĕç продукчĕсем, промышленноçа чĕртаварсем çителĕклĕ парса тăрассишĕн кĕрешме мобилизацилесси, — çакă пулать ĕнтĕ ялти комсомолецсен тĕп задачи. Ялти комсомолец хăйне ăнăçлăн ĕçлеме тата хăй хыççăн колхозниксене ертсе пыма, халăх умĕнче авторитетлă çын пулма кирлĕ практикăллă пĕлӳсене туянма тивĕçлĕ. «Ялхуçалăх ĕçĕсене лайăх пĕлекен, хресчен хуçалăхне çĕклеме, ăна лайăхлатма тата çирĕплетес тĕлĕшпе усăллă канашсем пама пултаракан комсомолец-активист кăна хресчен умĕнче шанчăка тухма пултарать». (СТАЛИН). Сталин юлташ кăтартса панисем ялти комсомолецсемшĕн закон пулса тăраççĕ. Пленум решенийĕсенче кашни комсомолец хăй ăçта ĕçленине кура агротехникăпа зоотехникăн пĕлĕвĕсене илме тивĕçли çинчен уйрăмăн çырса хăварнă.

Пленум ялти комсомолецсем çураки планне тултарассишĕн, МТС-сен ĕçĕсене лайăхлатассишĕн, акса хăварнă тырпул тухăçне ӳстерессишĕн пыракан кĕрешĕве хутшăнни политикăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртса пачĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн пленумĕ комсомолăн шкулти ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе тата комсомолăн ялсенче çывăх вăхăтрах тумалли ĕçĕсем енĕпе палăртса хăварнă программăсем çамрăксен союзĕн вырăнсенчи ертсе пыракан органĕсенчен хăйсен ĕçне татăклăнах ертсе пыма хушаççĕ. Канцеляринчен бюрократла ертсе пырас меслете, ертсе пырас ĕç çине çиелтен тата пĕтĕмĕшле пăхассине тĕппипех пĕтермелле. ВЛКСМ райкомĕсемпе Обкомĕсен, крайкомĕсемпе союзлă республикăсенчи Центральный Комитечĕсен пуçламĕш организацисене конкретлă, оперативлă ертсе пымалла, вырăнсенчи актива пĕлсе тăмалла тата вĕсене яланах пулăшу памалла.

Парти организацийĕсен вырăнсенче комсомола хальхи тапхăр ыйтнă пек, пурнăç ыйтнă пек ĕçлеме тата ертсе пыма вĕрентмелле. Парти организацийĕсем ертсе пынипе комсомол хăйĕн умне ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XII-мĕш пленумĕ лартнă задачăсене ăнăçлăн пурнăça кĕртĕ.

(«Правда» хаçатăн апрелĕн 13-мĕшĕнче пичетленнĕ умстатьи).

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 13-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 13-мĕшĕнче ОДЕССА хулинчен кăнтăр хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем вăйлăн çапăçнă хыççăн Одесса облаçĕнчи ОВИДИОПОЛЬ район центрне, СКУРТЫ, МОЛДОВА, БАРАБОЙ, САНЖИЙКА, ТОМАШЕВКА, ДАЛЬНИК, НОВЫЙ ПОСЕЛОК, ГРИБОВКА ялĕсене тата БАРАБОЙ, ОВИДИОПОЛЬ чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, апрелĕн 13-мĕшĕнче, танковăй соединенисемпе пехота вирлĕн атакăланипе пула, Крым столицине — СИМФЕРОПОЛЬ хулине — туртса илнĕ. СИМФЕРОПОЛЬ хули вăл тăшман оборонин тĕреклетнĕ тĕп пункчĕ пулнă, вăл Крым çурутравĕн кăнтăр çыранĕнчи портсем патне пымалли çулсене пӳлсе тăнă. Пирĕн çарсем тата Хура тинĕс хĕрринчи ЕВПАТОРИЯ портне туртса илнĕ, çак порт Крымăн хĕвеланăç çыранĕнче нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕ пулса тăнă. Кунсăр пуçне, пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса ытти 500 пункта ытла йышăннă. Çав шутра: Крымăн район центрĕсем—ДЖУРЧИ тата АК-ШЕЙХ; пысăк ялсем — НОВЫЙ КИЗИЛ-БАЙ, АТАЙ, КАРА-НАЙМАН, КОДЖАМБАК, КОНСТАНТИНОВКА, ЭСКИ-АЛИ-КЕЧЬ, БИЮК БУЗАВ, ФРИЛИНГ, БЮТЕНЬ, СПАТ, САРАБУЗ БОЛГАРСКИЙ, АННОВКА, ТАБУЛДЫ, НОВО-ЦАРИЦЫНО; чугун çул станцийĕсем — КИТАЙ, САРАБУЗ, КАРА-КИЯТ. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе каялла чакса, тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳсет. Малтанлăха палăртнă тăрăх, апрелĕн 12-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле Украинăри 4-мĕш фронт çарĕсем тăшманăн 11.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

ПРИМОРСКИ Уйрăм Армийĕн çарĕсем тăшманăн АК-МОНАЙ позицийĕсенчи оборонине татнă та, наступление вăйлатса пырса, апрелĕн 13-мĕшĕнче Хура тинĕс хĕрринчи ФЕОДОСИЯ хулипе портне туртса илнĕ. Çак хулапа порт нимĕçсен Крымăн кăнтăр-хĕвеланăç çыранĕнчи оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕ пулнă. Пирĕн çарсем тата, çапăçса, халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Çав шутра: Крымăн район центрĕсем — СТАРЫЙ КРЫМ хули, ИСЛАМ-ТЕРЕК, ВЛАДИСЛАВОВКА; чугун çул узелĕ; пысăк ялсем—СЕМЕНОВКА, НОВЫЙ КАРАБАЙ, НАЙМАН, ИЗЮМОВКА, КОЛОНИЯ БОЛГАРСКАЯ, КОКТЕБЕЛЬ; чугун çул станцийĕсем — САРЫГОЛЬ, ИСЛАМ-ТЕРЕК, КИЛИЧИ.

Малтанлăха палăртнă тăрăх, ПРИМОРСКИ Уйрăм Армийĕн çарĕсем апрелĕн 12-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле тăшманăн 9.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Апрелĕн 12-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 35 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 38 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Одесса хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапла наступлени туса пынă. Хаяррăн çапăçнă хыççăн совет çарĕсем Одесса облаçĕнчи Овидиополь район центрне тата халăх пурăнакан ытти темиçе пункта туртса илнĕ. Тăшманăн аркатса тăкнă чаçĕсен юлашкийĕсене Днестр лиманĕ патне хĕстерсе лартнă, вĕсене совет артиллерийĕ пĕр тăтăшах персе тăрать. Пирĕн авиаци тăшманăн Бугаз Млякĕ касси патĕнче тата Аккерман чугун çул станцийĕнче капланса тăнă çынписене, автотранспортне тата чугун çул эшелонĕсене кăнтăрла та, çĕрле те штурмланă, бомбăсем пăрахнă. Совет летчикĕсем икĕ чугун çул эшелонне çĕмĕрнĕ, нумай вагона сирпĕнтерсе янă, 100 автомашина таран пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн çарсем тиснĕ темиçе катерĕпе понтонне шыва путарнă.

* * *

Украинăри 4-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Тăшман Крымăн кăнтăрти порчĕсем патне пымалли çулсене пӳлсе тăракан Симферополь хулине кирек мĕн пулсан та хăйĕн аллинчех хăварма тăрăшнă. Нимĕçсен командованийĕ Симферополь патне уйччен çапăçусенче пулман чаççене илсе пынă. Анчах та гитлеровецсем совет çарĕсем хĕснине тӳссе тăрайман. Пирĕн танковăй соединенисемпе пехота Сарабуз Болгарский ялне йышăннă та Симферополь хулине хӳтĕлесе тăракан тăшмана темиçе енчен пырса атакăланă. Нимĕçсен хирти жандармерийĕн ятарласа уйăрнă отрячĕсем сехре хăпнипе таракан нимĕç салтакĕсене тыта-тыта чарса, çавăнтах персе пере вĕлернĕ. Анчах çак калама çук хаяр мера те вĕсене пулăшман. Нимĕç командованийĕ хăйĕн çарĕсене йĕркене кĕртме тата пирĕн çарсене мĕн чухлĕ те пулин вăрах хирĕç тăрассине организацилеме пултарайман. Пирĕн çарсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та паян кăнтăрла Крым столицине — Симферополь хулине—туртса илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, çав шутра хĕçпăшал, боеприпас тата çар пурлăхĕ тиенĕ 10 эшелон. Пирĕн ытти чаçсем, нимĕçсемпе румынсен аркатса тăкнă çарĕсене хăваласа пырса, 60 километр ытла малалла кайнă та çĕрле Евпатория хулипе портне штурмласа тытса илнĕ. Çав районра 2.000 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 70 тупă, 200 пулемет, 69 миномет, 400 автомашинăпа лав ытла, боеприпассемпе çар пурлăхĕн темиçе складне тытса илнĕ. Тытса илнĕ трофейăсемпе тыткăна илнĕ çынсен хисепĕ сехетсеренех ӳссе пырать.

Приморски Уйрăм Арми çарĕсем нимĕçсем Ак-Монай позицийĕсем çинче хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та, вĕсене хыççăнах хăваласа пырса, Феодосия хулине вăркăнса кĕнĕ. Урамсенче кĕске вăхăт хушши çапăçсан, пирĕн боецсем Феодосия хулипе портне туртса илнĕ. Наступление вăйлатса пырса, совет танкисчĕсемпе пехотинецĕсем хăвăрттăн хĕвеланăçнелле тата Крымăн кăнтăр-хĕвелтухăç çыранĕ тăрăх малалла куçса пыраççĕ. Партизансен пĕрлешнĕ темиçе отрячĕ, Хĕрлĕ Çар чаçĕсене пулăшса пырса, Старый Крым хулине вăркăнса кĕнĕ те Феодосия хулинчен таракан тăшман чаçĕсен каялла чакмалли çулĕсене пӳлсе лартнă. Совет боецĕсемпе партизансем, пĕрле пыра-пыра çапса, тăшманăн çав группировкине пĕтĕмпех аркатса тăкнă. Нимĕçсемпе румынсем чылайĕшĕ хĕçпăшалĕсене пăрахса тыткăна парăннă. Пирĕннисем 20 танк, 220 тупăпа миномет, 370 пулемет, 3.000 лаша тата хĕçпăшал, боеприпас, апат-çимĕç хунă пысăк складсем тытса илнĕ. Тăшман хушăри рубежсенче тытăнса тăма хăтланнине пирĕн çăмăллăн куçса çӳрекен чаçсем вирлĕн пырса çапса путлантарса лартнă.

* * *

Хура тинĕс флочĕн торпеда катерĕсем ушкăнĕ Крымăн хĕвелтухăç çыранĕ патĕнче тăшманăн хăвăрт çӳрекен икĕ десант баржине курнă. Çав баржăсене 15 катер (хурал катерĕсемпе торпеда катерĕсем) хураллса пынă. Тăшман катерĕсем пирĕннинчен чылай йышлăрах пулнă пулин те, пирĕн торпеда катерĕсем тăшман суднисене атакăланă, ăста маневрсем туса, хăвăрт çӳрекен десант баржине тата пĕр хурал катерне путарнă.

Крымăн кăнтăр çыранĕнчи пĕр портра Хура тинĕс флочĕн летчикĕсем тăшманăн хăвăрт çӳрекен десант баржине шыва путарнă.

* * *

Бароновичи облаçĕнче кĕрешекен белорус партизанĕсен темиçе отрячĕ çичĕ кун хушшинче нимĕçсен 13 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Крушенисенче 11 паровоз, горючи тултарнă 7 цистерна, 80 вагон тата çар хатĕрĕсем тиенĕ 15 платформа çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Дзержинский ячĕпе тăракан отрядри партизансем нимĕçсен карательнăй отрядне тапăннă. Партизансем 80 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă тата Германие каторгăна хăваласа каякан совет гражданĕсене ирĕке кăларнă. Тепĕр районра совет патриочĕсем 700 рельса сирпĕнтерсе янă тата телеграфпа телефон çыхăнăвне 21 километр тăршшĕнче пăсса хунă.

Ӳкерчĕк çинче: Республикăри малта пыракан ялсовет исполкомĕн председателĕ Гаррифулин юлташ.

Елчĕк районĕнчи Сăрьел ялсоветне Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă

Çак кунсенче Елчĕкре, ялсовет председателĕсемпе колхоз председателĕсен районри канашлăвĕнче, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн секретарĕ А. Измайлов юлташ республикăра малта пыракан Сăрьел ялсоветне 1943 çулхи ĕçсемшĕн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пачĕ.

Измайлов юлташ Хĕрлĕ Ялава панă чухне ялсовет тата «Марс» колхоз 1943 çулта лайăх ĕçлени çинчен каласа пачĕ, 1944 çулта тата лайăхрах ĕçлеме, сĕнчĕ.

Куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялав илнĕ чухне ялсовет председателĕ Гаррифулин юлташ партипе правительствăна малашне тата ытларах вăй хурса ĕçлеме, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне чыслăн тытса тăма сăмах пачĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Республикăри финанс органĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи 1-мĕш кварталти итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ, финанс органĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи 1-мĕш кварталти итогсене пăхса тухса, ăмăртура Октябрьски райсовет исполкомĕн финанс пайĕ (финанс пайĕн заведующийĕ Егоров юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Херсонов юлташ) мала тухнă тесе йышăннă. Октябрьски район 1944 çулхи 1-мĕш кварталта ĕççыннисенчен укçа-тенкĕ пухмалли плана 144.9 процент пурнăçланă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Октябрьски райсовет исполкомĕн финанс пайне памалла тунă, ăна тата пĕррремĕш преми—12 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

Иккĕмĕш премие (8 пин тенкĕ) Сĕнтĕрвăрри райсовет исполкомĕн финанс пайне виççĕмĕш премие (5 пин тенкĕ) Вăрнар райсовет исполкомĕн финанс пайне памалла тунă.

Совнарком 1944 çулхи пĕрремĕш кварталта Красноармейски, Елчĕк, Вăрмар, Советски, Шупашкар, Первомайски, Куславкка районĕсенчи финанс пайĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Çавăн пекех тата 1-мĕш кварталта Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав, Шăмăршă, Кувакино, Çĕмĕрле, Етĕрне районĕсенчи финанс пайĕсем япăх ĕçленине палăртнă. Асăннă районсен руководителĕсене çак ĕçа лайăхлатас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнма хушнă.

Вырăнти промышленность предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи март уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Çак кунсенче Чăваш АССР Совнаркомĕ, вырăнти промышленность предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи март уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Ăмăртура Тăвай районĕнчи промкомбинат (управляющийĕ Игнатьев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Широв юлташ) мала тухнă тесе йышăннă. Вăл март уйăхĕнче пĕтĕм продукци кăлармалли государство планне 155 процент, кулленхи кирлĕ таварсем кăларас енĕпе плана 180 процент пурнăçланă. Февраль уйăхĕнчипе танлаштарсан, продукци кăларассине 55 процент ӳстернĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне унăн аллинчех хăварса, ăмăртура уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 15 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

Кувакино районĕнчи промкомбината 10 пин тенкĕ, Куславкка районĕнчи промкомбината 5 пин тенкĕ награда пама йышăннă.

Çавăн пекех Совнарком март уйăхĕнче Улатăрпа Канаш хулисенчи промкомбинатсем, Элĕк, Шупашкар, Вăрнар, Калинино, Сĕнтĕр. Вăрмар районĕсенчи промкомбинатсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Маршалсен „Маршал çăлтăрĕ" паллине тата СССР орденĕсене пани

Апрелĕн 12-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ М. И. Калинин юлташ Маршалсен «Маршал çăлтăрĕ» паллине инженери çарĕсен Маршалне М. П. Воробьева панă.

1-мĕш степень Суворов орденне Госбезопасноçăн 2-мĕш рангри комиссарĕсене С. Н. Кругловпа И. А. Серова панă, 2-мĕш степень Суворов орденне Госбезопасноçăн 3-мĕш рангри комиссарне А. И. Воронина панă, 2-мĕш степень Кутузов орденне Госбезопасноçăн комиссарне И. М. Ткаченкăна панă. Вĕсене çав орденсемпе правительствăн хăйне уйрăм заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçланăшăн наградăланă.

2-мĕш степень Суворов орденне Е. А. Щаденко генерал-полковника панă. 2-мĕш степень Богдан Хмельницкий орденне В. Я. Владимиров генерал-майора панă. Вĕсене ку орденсемпе вăрçă операцийĕсене пĕлсе тата хăюллă ертсе пынăшăн, тата çав операцисене пула фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче çитĕнӳсем тунăшăн наградăланă. (ТАСС).

Тата тепĕр мартен кăмаки ĕçлеме пуçланă

Хĕрлĕ Çар историллĕ çĕнтерӳсем туса пынă кунсене Константиновкăри Фрунзе ячĕпе тăракан металлурги завочĕ (Донбасс) производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе паллă тăвать. Заводра иккĕмĕш номер мартен кăмакине юсаса ĕçе янă. Апрелĕн 8-мĕшĕнче çав кăмакара юсанă хыççăн пĕррремĕш хут хурçă шăратнă. (ТАСС).

Сталинора АТС ĕçлеме пуçланă

Сталинора (Донбасс) автоматлă телефон станцине ĕçе янă. Çав станци 2.000 телефона çыхăнтарса тăрать. Ăна юсаса ĕçе яма тăвакла республикăсенчи çыхăну работникĕсем нумай пулăшнă. Вĕсем çав станци валли аппаратура, материалсем тата кирлĕ инструментсем янă. (ТАСС).

Шупашкар хула Совечĕн Сессийĕ

1944 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕнче Шупашкар хула Совечĕн 24-мĕш Сессийĕ пулса иртрĕ.

Сесси Шупашкар хула совечĕн 1942-мĕшпе 1943-мĕш çулсенчи бюджетне пурнăçа кĕртни тата 1944 çулхи бюджетне çирĕплетесси çинчен хула совет исполкомĕн финанс пайĕн заведующийĕ Прокопьева юлташ тунă доклада сӳтсе-яврĕ.

— Хулари ĕççыннисем,—тет докладчик,—отечественнăй вăрçă кунĕсенче, пĕтĕм Совет Союзĕнчи ĕççыннисем пекех, партипе правительство хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшас тата государствăн финанс хăватне ӳстерес тĕлĕшпе тăвакан мĕнпур ĕçсене активлăн хутшăнаççĕ.

Шупашкар хула совечĕн 1942 çулхи бюджечĕ доходсемпе расходсем енĕпе 9.179,0 пин тенкĕ чухлĕ пулнă. 1942 çулхи бюджета доходсем енĕпе 107,7 процент, расходсем енĕпе 109,6 процент пурнăçланă.

Хула совечĕн 1943 çулхи бюджечĕ доходсемпе расходсем енĕпе 12.960 пин тенкĕ пулнă. Доходсем енĕпе 1943 çулхи бюджета 107,7 процент пурнăçланă. Доходсем енĕпе бюджета 1942 çулхинчен ытларах пурнăçланă. Анчах та ăна татах та ытларах пурнăçлама майсем пулнă.

Хулари чылай предприятисемпе учрежденисем хăйсен бюджет умĕнчи обязательствисене начар пурнăçлаççĕ. Пуринчен ытла хулан коммуналлă хуçалăх предприятийĕсем бюджета начар пурнăçлаççĕ. Çаксен шутне хулари коммуналлă мунча, Колхозниксен çуртĕ кĕреççĕ. Коммуналлă мунча 1943 çулхи бюджета 70 процент кăна пурнăçланă.

Çавăн пекех докладчик вырăнти промышленность предприятийĕсем те 1943 çулхи бюджета тивĕçлĕн пурнăçламанни çинче чарăнса тăрать. Леспромартель (председателĕ Зайцев), «Кожупряжь» артель (правлени председателĕ Плотнева) 1943 çулхи бюджета пурнăçлайман.

Водосвет 1943 çулта электроэнерги памалли çулталăкри плана 67,6 процент кăна пурнăçланă. Хулари предприятисемпе учрежденисене тата халăха электроэнерги планпа пăхнинчен 3.271,0 киловатт-сехет чухлĕ сахалтарах панă.

Расходсем енĕпе те бюджета çителĕксĕр пурнăçласа пынă. Хулана юсаса илмелли, общественăллă-культурăллă ĕçе çĕклемелли чылай мероприятисене пурнăça кĕртмесĕр хăварнă.

Шупашкар хула совечĕн 1944 çулхи бюджетне Чăваш АССР Верховный Совечĕн VII-мĕш сессийĕ доходсемпе расходсем енĕпе 11.730 пин тенкĕ чухлĕ çирĕплетнĕ.

Докладчик 1944 çулхи доходсем илмелли çăлкуçсене кăтартса парать. 1944 çулхи бюджета вăрçă вăхăтĕнчи условисене шута илсе туни çинчен калать.

Анчах та хулари предприятисемпе учрежденисен 1944 çулхи пĕрремĕш кварталти ĕçĕсене пăхса тухсан çакă курăнать: водосвет пĕрремĕш кварталти плана 84,5 процент çеç пурнăçларĕ. Планпа 2.000 пин киловатт-сехет электроэнерги памалла пулсан, вăл 1689 пин киловатт-сехет кăна пачĕ. Водосвет çакнашкал ĕçленине текех тӳсме те чăтма çук. Ку ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе халех татăклă мерăсем йышăнмалла.

Кун хыççăн сесси Шупашкар хула совечĕн бюджет комиссийĕ председателĕн Зимин юлташăн содокладне итлерĕ. Ку ыйту тăрăх прение 9 çын тухса каларĕç.

Сесси Шупашкар хула Совечĕн 1942-мĕшпе 1943 çулсенчи бюджетне пурнăçа кĕртни отчетне 1944 çулхи бюджетне çирĕплетрĕ.

Донбасри шахтерсем культура дворецĕсене юсаççĕ

Донбасра шахтерсемпе вĕсен арăмĕсем кĕске вăхăтрах 13 культура дворецне тата 184 клуба юсаса пĕтернĕ.

Макеевуголь трестăн София шахтинчи горнякĕсем тăвакан культура дворецĕнче 20 пӳлĕм пулать. Ăна тунă çĕре килхуçи хĕрарăмĕсем активлăн хутшăннă. Вĕсенчен нумайĕшĕ плотник, штукатур, маляр ĕçĕсене вĕренсе çитнĕ, халĕ ĕнтĕ вĕсем хăйсем тĕллĕнех ĕçлеççĕ. (ТАСС).

Совет Союзĕпе Çĕнĕ Зеланди хушшинче дипломатилле çыхăну пуçланса кайни

Çĕнĕ Зеланди Великобританири Аслă Комиссарĕ В. Дж. Джордан господинпа ССР Союзĕн Великобританири посолĕ Ф. Т. Гусев юлташ хушшинче калаçусем пулса иртнĕ хыççăн ĕнер, апрелĕн 13-мĕшĕнче, ССР Союзĕпе Çĕнĕ Зеланди Правительствисем пĕр-пĕрин патне нотăсем янă. Çав нотăсенче вĕсем пĕр-пĕрне дипломатиллĕ çыхăну пуçласа яни çинчен тата пĕр-пĕрин патне посланниксем ямалла туни çинчен калана.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсен районсенчи пухăвĕсем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Çак кунсенче кунта коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ВКП(б) Обкомĕн XVIII-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен райсовет исполком председателĕн Александров юлташăн докладне сӳтсе-яврĕ. Пренире 13 коммунист тухса каларĕç. Вĕсем районри колхозсенче суракине хатĕрленес ĕç çителĕксĕр пынине палăртрĕç.

Паянхи куна колхозсем пĕр-пĕрне 580 центнер вăрлăх парса пулăшнă. Анчах та çакă вăл пачах çителĕксĕр-ха. Районри хăшпĕр колхозсенче, уйрăмăнах Молотов ячĕпе тăракан (Мартынкасси ялсовечĕ), «Большевик» (Карай ялсовечĕ), «Коммунар» (Пшонка ялсовечĕ) тата ытти колхозсем, вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемеççĕ. Районĕпе илсен сĕлĕ вăрлăхĕ 10 процент, вика вăрлăхĕ 8 процент, клевер вăрлăхĕ 50 процент, çĕрулми вăрлăхĕ 9 процент çитмеççĕ.

Степанов юлташ МТС-ри коммунистсем суракине çителĕклĕ таран хатĕрленес çитменнине палăртса, МТС-ри пуçламĕш парторганизаци ĕçне хытăн критиклерĕ. Коммунистсем хушшинче дисциплинăна пăсакансем те пур. Сăмахран, Беловпа Гаврилов ĕçе пымасăр тăраççĕ. МТС-ра трактористсен квалификацине ӳстерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. МТС дирекцийĕ тата пуçламĕш парторганизаци техминимум кружокĕсем организацилемен. Чи лайăх трактористсем хăйсен сменинче норма тăрăх миçе гектар сухаламалли çинчен те пĕлмеççĕ.

МТС горючи хатĕрлес тĕлĕшпе плана 90 процент çеç тултарнă. Плугсемпе сеялкăсене 80 процент юсанă. Чылай колхозсем МТС валли горючи кӳрсе килес ĕçе пурнăçламаççĕ. «Искра» колхоз ку таранччен пĕр килограмм та горючи кӳрсе килмен.

Пуху уйрăмăнах колхозсем суракине тухма лашасене çителĕксĕр хатĕрленине палăртрĕ. Кăçал кашни лаша пуçне 5—20-шер гектар сухалама тивет. Анчах та колхозсенче лашасене тивĕçлипе пăхмаççĕ. Районра вăкăрсем те чылай. Мĕн пурĕ те 60 вăкăра çеç кӳлме вĕрентнĕ. «Новый мир», «Большевик», «Жнейка», Буденный ячĕпе тăракан колхозсенче выльăх апачĕсем çитмеççĕ. Апата пулин те унта выльăх апачĕ хатĕрлесси çинчен шутламаççĕ те. «Исаково», «Красный богатырь» тата ытти колхозсем те лашасене шеллемесĕр тыткалаççĕ. «Исаково» колхоз членĕ Никитин пĕр лашана вĕлерчĕ. «Орден Ленина» колхоз счетоводĕ выльăхсем валли уйăрнă 120 пăт тырра хăй килне илсе кайнă. Кайран вăрă конюхсене эсир выльăхсене çавăн чухлĕ тырă çитерсе янă тесе вăрçа-вăрçах ала пустарнă. Анчах та çакăн пек сынсене паянхи куна çитсе те ответ тыттарман. Районри прокурор Зайцев çак материалсене пăхса тухас ĕçе вăрăма тăсса пырать.

Партин районри пухăвĕ çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палăртса хăварчĕ.

С. ШАДИН.

* *

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, апрелĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Коммунистсен районри пухăвĕ ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Захаров юлташ район суракине мĕнле хатĕрленни çинчен тунă доклада сӳтсе-яврĕ.

Малта пыракан «Коминтерн», «Новый путь» тата Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем суракине тивĕçлипе хатĕрленнĕ. Вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсем кондицие ларнă. Ялхуçалăх машинисене лайăх пахалăхпа юсанă, выранти удобренисене хатĕрлемелли плана ирттерсе тултарнă. Ку колхозсенче коммунистсем агитаци ĕçне тивĕçлипе туса пыраççĕ. Вĕсем кăçал колхозниксем хушшинче 14 хутчен доклад, 12 калаçу ирттернĕ. Драмкружок 14 хутчен спектакль лартса панă. Уйăхра пĕрре «Комсомолец» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать.

Пĕтĕм районĕпе илсен, суракине хатĕрленес ĕçре çитменлĕхсем те чылай-ха. Çĕрулми, кантăрвăрри, йĕтĕн тата клевер вăрлăхĕсем чылай çитмеççĕ. Вăрлăх хатĕрлессипе, «Авангард», Калинин, Молотов, Каганович ячĕсемпе тăракан колхозсем юлса пыраççĕ. Вĕсенче вăрлăхсем 50—60 процент чухлĕ çеç хатĕрленĕ.

Пуху «Память Ленина», «Мотор», «Великан», «Красная звезда», «Сталь» колхозсенче лашасене начар пăхнине палăртрĕ. Ку колхозсен руководителĕсем, çавăн пекех коммунистсем те, лашасене мĕнле пăхнине тĕрĕслесе тăмаççĕ.

МТС-ри трактористсем апрелĕн 5-мĕшĕ тĕлне тракторсене юсас ĕçе вĕçленĕ. Кирлĕ чухлĕ горючи хатĕрленĕ. Анчах та газогенераторнăй тракторсем валли чуркăсем хатĕрлес ĕç япăх пырать. «Красный Четай», «Красный маяк» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсем чуркăсем турттарса памаççĕ.

Пренире 16 çын тухса каларĕç. Вĕсем кĕске вăхăтрах ĕçри çитменлĕхсене пĕтерсе, суракине лайăх пахалăхпа ирттерме пулчĕç.

А. ШИНЖАЕВ.

Коммунистсем вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ

ИЁПРЕÇ. «Большевик» колхозри пуçламĕш парторганизацире пурĕ 6 коммунист. Вĕсем суракине пур енчен те çителĕклĕ хатĕрленсе, гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Выранти удобренисем пухса хатĕрлес тĕлĕшпе Тумович юлташ ĕçлет. Вăл хăй кăна 15 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, кĕл чылай хатĕрленĕ. Парторганизаци секретарĕ Реза Кур юлташ тăтăшах вăрлăхсем тасатнă çĕрте ĕçленĕ. Колхоз кăçал çителĕклĕ таран лайăх вăрлăхсем хатĕрлесе хунă, вĕсем пурте кондицие ларнă. Малтан пăрçа вăрлăхĕ çителĕклĕ лайăх пулман. Парторганизаци пуçарнипе ăна алăпа суйлаттарнă.

Парти членĕн кандидачĕ М. Егоров юлташ ялхуçалăх инвентарĕсене юсас ĕçе ертсе пынă. Колхоз плугсемпе сӳресене пĕтĕмпе юсанă, хире 4.950 лав тислĕк кăлармалла пулнă пулсан, 6.000 лава яхăн кăларнă.

Коммунист учитель Андюкин юлташ агитацилле-массăллă ĕçе ертсе пырать. Вăл час-часах колхозниксене фронтра çитĕнӳсем çинчен тата тĕнчери лару-тăру çинчен ăнлантарса парать.

Коммунистсем колхозра лашасене мĕнле пăхнине, выльăх апачĕсене епле тыткаланине те асăрхаса тăраççĕ.

П. КУРАКОВ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

Ӳкерчĕк çинче: Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри стахановец-фрезеровщик **Королев** юлташ. Вăл май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, кулленхи задание 400 процент таран пурнăçласа пырать.

КОСТЫЛЕВ фотоӳкерчĕкĕ.

ШУПАШКАРТИ ПРЕДПРИЯТИСЕНЧЕ

Шупашкарти предприятисемпе учрежденисенче май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту анлăн саралса пырать. Рабочисемпе работницăсем апрель уйăхĕнчи производство планне срокчен пурнăçлассишĕн хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илеççĕ.

«Металлист» артель производство планне кашни уйăхрах ирттерсе тултарать. Март уйăхĕнчи плана вăл 235 процент тултарчĕ.

Халĕ артель коллективĕ, май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пырать. Коллектив уйăхри задание апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне 200 процент тултарма шухăшлать. Пур цехсенче ĕçлекенсем те илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçлассишĕн ăмăртăва анлăн сарса ячĕç. Трофимов, Салаев, Михайлов стахановецсем задание кашни кунах 250—300 процент тултараççĕ.

Обязательствăсене пурнăçлаççĕ

ЕЛЧĔК, апрелĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Крахмал завочĕн коллективĕ пĕрремĕш кварталта продукци туса кăлармалли задание 105 процент пурнăçларĕ. Март уйăхĕнчи плана 110 процент таран тултарчĕ.

Заводри рабочисемпе работницăсем «Красный Пролетарий» завод коллективĕн чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн, май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, иккĕмĕш кварталти производство планне 115 процент, апрель уйăхĕнчи задание 120 процентран кая мар тултарма сăмах пачĕç.

Хĕрлĕ Çар тăшмана Румынипе Чехословаки чиккисем патне çитиччен аркатса пыни ĕçлекенсене хавхалантарать. Чаплă çĕнтерӳ ячĕпе кашни ĕçлекен хăйĕн ĕççинче çĕнĕ çитĕнӳ тума тăрăшать. Çак кунсенче кунта ĕç тухăçлăхĕ уйрăмах ӳсрĕ. Ĕç нормине кашни рабочипе работница тенĕ пекех икĕ хут ирттерсе тултараççĕ. М. Тихонова, Р. Фадеева, Е. Агеева стахановкăсем задание 220—230 процент таран тултарма тытăнчĕç.

И. ГОРШКОВ,
Крахмал завочĕн директорĕ.

Ют çĕршывсенче

„Гитлер çарне калама çук вăйлăн пырса çапнă"

Совет çарĕсем Крымра çĕнтерсе пыни çинчен Англире мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, апрелĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Совет çарĕсем Симферополь, Феодосия тата Евпатория хулисене туртса илни çинчен каласа, Лондонри радио Совет çарĕсем Крымра ытла та хăвăрт малалла куçса пынине палăртать. Совет çарĕсем тĕлĕнмелле хăвăрт малалла куçса пыраççĕ,—тенĕ пĕр обзорта.

Тăшман çарĕсем ним тума аптăраса çитнине нимĕçсем нумайĕшĕ тыткăна лекни кăтартса парать, тет радио.—Фронтран килекен хыпарсем тăшманăн Крымри çарĕсене хăвăрт аркатса тăкни çинчен тата Гитлер çарне çак вăрçăра тата тепĕр хут çав тери вăйлăн пырса çапни çинчен калаççĕ, тет.

Лондонри чехословаксен митингĕ

ЛОНДОН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Апрелĕн 11-мĕшĕнче Кекстон-Холлра Хĕрлĕ Çар Чехословаки чиккине тухнă ятпа чехословаксен митингĕ пулса иртнĕ. Митинга нации оборонин министрĕ Ингр уçнă. Вăл çапла каланă: И. В. Сталинăн Хĕрлĕ Çар Чехословаки чиккине тухни çинчен калакан приказне Чехословаки халăхĕсем нихăçан та манмĕç. Çав приказ чехословак халăхне нимĕçсемпе венгерсен захватчикĕсене хирĕç усăнах вăрçă пуçласа яма чĕнет.

Ингр каланă хыççăн митингра Верховный Главнокомандующине Совет Союзĕн Маршалне Сталина, Бенеш президента, Совет Союзĕн Маршалне Жукова тата чехословаксен Совет Союзĕнчи бригадине ямалли саламлă телеграммăсене вуласа панă. Çав телеграммăсене митингри çынсем пурте нумайччен тăвăллăн алă çупса йышăннă.

Государство совечĕн председателĕн заместителĕсем Лаушман тата Шаулини-Тот, çавăн пекех тата государство совечĕн членĕ Петрущак сăмах тухса каланă.

Митинг Чехословаки халăхĕсене çапла чĕнсе каланă:

«Чехословаки халăхĕсем! Ирĕклĕх пирĕн çĕршывăн чиккине çитрĕ ĕнтĕ, совет тупписен сасси çавăн çинчен пĕлтерет; вăл сире демократиллĕ Чехословакин ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешме чĕнет. Эпир çапла тупа тăватпăр: хураймн тăшмана аркатса тăкмашкăн сире тата хамăрăн союзниксене пулăшас тесе пиртен кашнийĕ хăйĕн вырăнĕнче мĕнпур вăйпа ĕçлĕ. Эпир Хĕрлĕ Çара тата Чехословаксен Совет Союзĕнчи çар чаçне саламлатпăр. Эсир, тăшман речĕсем урлă тухса, ирĕклĕх валли çул уçса хурăр, хальхи вăхăтра Карпат тăвĕсем çинче ялкăшакан пирĕн ялав малашне Кошт тăвĕсем çинче ялкăшса тăтăр».

ГИТЛЕРĂН РУМЫНИРИ ХӲРЕШКИСЕМ АПТĂРАСА ХĂРАСА ӲКНĔ

СТАМБУЛ, апрелĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Турцири «Тан» ятлă хаçат Бухарестран илнĕ статьяна пичетлесе кăларнă. Унта çапла çырнă: «Румынире хумханусем тата халăх пăшăрханни вĕçне çитнĕ. Пĕтĕм Румынипе пур çĕрте те аптăраса хăраса ӳкнĕ». Çак кунсенче Бухарестри хаçатсенче влаçсем Румыни столицинчи халăха чĕнсе каланине пичетлесе кăларчĕç. Унта халăха çаксене тума хушнă: «Кашни харпăрхăй пурлăхне сыхлама тăрăштăр, чи хаклă пурлăха ытла кăрушах мар районсене тăванĕсем патне е паллакан çынсем патне ăсатма тăрăштăр», тенĕ. Влаçсем тата çакăн çинчен асăрхаттарнă: çавна пурне те «ăпăкă, чĕтрене ормесĕр» туса ирттермелле. Анчах та ĕçе выранта тăракан çынсем хăйсен япалисемпе пĕрле хăйсем те, такам хăвалнă пекех, Бухарестран тухса тарма васкаççĕ. Юлашки кунсенче Румыни столицинчен темĕн чухлĕ чиновник тухса тарнă. Çавна пула Антонеску правительстви çĕнĕрен тата тепĕр приказ кăларнă. Çав приказра «хуларан хăйсен ирĕкĕпе тухса каякан» чиновниксене питех те хытă айăплассипе хăратнă.

Хулара кунĕн-çĕрĕн «шанчăксăр» çынсене тыта-тыта хупаççĕ.

ГИТЛЕРĂН РУМЫНИРИ ТАРÇИСЕМ ТАРМА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Крисчен Сайенс Монитор» ятлă хаçатăн корреспонденчĕ Лиссабон хулинчен çапла пĕлтерет, кунта Румынирен пĕр çын çитнĕ. Вăл каланă тăрăх, асăл вырăнсенче ĕçлекен румынсем тарма хатĕрленеççĕ, вĕсем хаклă тăракан япалисене питĕ хаклă хакпа илсе тултарма васкаççĕ. Правительствăн хăшпĕр деятелĕсем, вăхăт çитсен тарма кирлĕ пулĕ тесе, кашни харпăрхăй уйрăм самолетсем туянса хунă.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: пур фронтсенче те патрульсем тытăça-тытăça илнĕ. Акăлчансен 8-мĕш армийĕнчи индеецсен чаçĕсене хирĕç тăшман пысăк мар атакăсем тунă. Çав атакăсене пурне те сирсе янă.

Ĕнер союзниксен самолечĕсем тăшманăн Италири чылай объекчĕсене тата Сплит хулинчи завода (Югослави) атакăланă. Иртнĕ çĕр вăтам бомбардировщиксем Будапешт хулине ăнăçлăн тапăннă.

ИСПОЛНИТЕЛЬНĂЙ ДЖУНТА ЙЫШĂННА РЕЗОЛЮЦИ

АЛЖИР, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Апрелĕн 6-мĕшĕнче Сорренто хулинче исполнительнăй джунтăн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура çаксем те пулнă: родино (христиан демократĕсен партийĕнчен), Сфорца (кĕрешӳ партийĕнчен). Ларура джунта членĕсем пурте пĕр сасăпа пулса çакăн пек решени йышăннă:

«Исполнительнăй джунта хăйĕн ĕçĕсене малалла туса пыма пухăнчĕ. Вăл хăйĕн ĕçĕсене Бари хулинчи конгресс каласа хăварнă пек туса пырать. Çавăнпа та джунта, коммунистсен партийĕ пĕлтернĕ деклараци хыççăн пулса тăнă политикăллă лару-тăрăва пăхса тухса, çакна паллă тăвать: вăрçă правительстви тăвасси питĕ кирлĕ тата хăвăрт тумалли ĕç пулса тăрать. Джунта çакна хытă шанать: çак тĕлĕшпе тунă пуçарăва пула Итали халăхĕ кризисне пĕтĕмĕшпех тата чи сывăх вăхăтрах, Рима ирĕке кăлариччен, татса пама май пулĕ, тет».

ГЕРМАНИЕ НЕЙТРАЛЬНĂЙ ÇĔРШЫВСЕМ ТАВАРСЕМ ТĂРАТНИ ÇИНЧЕН АНГЛИ ХАÇАЧĔСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçатăн обозревателĕ Германие паха материалсем тăратакан нейтральнăй çĕршывсем тĕлĕшпе мĕнле позици йышăнмалли çинчен çырать. Çав çĕршывсем Германие союзниксене нумайрах вăхăт хушши хирĕç тăма пулăшаççĕ. Хальхи вăхăтра Турци, Испани, Португали, Швеци тата Аргентина ĕçĕсене питĕ хытă сăнаса тăраççĕ, тет.

Турци кăçал Германие хром ытларах та ытларах ярса тăрать,—тет обозреватель. — Испанипе Португали Германие ĕлĕкхи пекех вольфрам нумай яраççĕ. Швеци Германи промышленноçне тимĕр руди парса тăрса чылай пулăшать. Аргентина Германие Испани урлă çаплах тĕрлĕ таварсем ярса тăрать.

«Дейли мэйл» хаçат умстатья пичетлесе кăларнă. Çав умстатьяра тăшмана пулăшакан нейтральнăй çĕршывсене темиçе хут та асăрхаттарнă.

Нейтральнăй çĕршывсене çăлса хăварассишĕн те кĕрешекен союзниксен салтакĕсене вĕлерме пулăшса тăнă вăхăтрах çав çĕршывсем союзниксен ресурсĕсемпе усă курма пултарнипе союзниксем килĕшес çук, тенĕ пулнă Хэлл. Хэллăн çав сăмахĕсене аса илсе, «Дейли мэйл» хаçат çапла çырать:

«Союзниксем, нейтральнăй çĕршывсене тĕнĕл держависемпе суту-илӳ тума пăрахма ыйтса, хăйсен прависенчен иртмеççĕ, мĕншĕн тесен «çак вăрçăра чăнчăн нейтралитет пулма пултараймасть. Нимĕçсем, пĕчĕк çĕршывсене тапăнса, çав ухмахла йăлана (вĕсем нейтралитета çавăн пек каланă пулĕччĕç) пĕтерсе лартрĕç. Пĕчĕк çĕршывсене тапăнса, Германи хăй пĕтĕм этемлĕхĕн тăшманĕ пулса тăнине кăтартса пачĕ; апла хĕçпăшал тытса Германие хирĕç çапăçма килĕшмен çĕршывсем, чăннипе ăна пулăшса тăракансем, хăйсен нейтралитечĕн никĕсĕнче выртакан принципсене пăсаççĕ».

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: союзниксен йывăр бомбардировщикĕсен питĕ пысăк соединенийĕсем Австрири Винер-Нейштадт хулинчи «Мессершмитт» йышши самолетсем тăвакан пысăк завода тапăннă. Çавăн пекех тата Балфеслаури (Винер-Н[illegible] сурçĕртерехре) тата Фишабенд Маркри (Винер-Нейштадтран 25 миля сурçĕр-хĕвелтухăçнерехре) самолет пайĕсем туса кăларакан заводсем çине нумай тонна бомба пăрахнă.

ЛОНДОН, апрелĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 13-мĕшĕнче ирхине акăлчансен авиацийĕ нимĕçсен Сурçĕр Францири сыранĕнчи çар объекчĕсене тапăннă.

Апрелĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух сĕрле акăлчансен авиацийĕ Ганновер хулинчен 70 миля хĕвеланăçнерехре ларакан вăрçă тĕлĕшпе паха чугун çул узелне—Оснабрюка тапăннă.

Апрелĕн 13-мĕшĕнче ирхине американецсен вăтам бомбардировщикĕсен питĕ пысăк соединенийĕсем Сурçĕр Францири тата Бельгири объектсене атакăланă.

СОФИЯ ХУЛИНЧИ ЛАРУ-ТĂРУ

СТАМБУЛ, апрелĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, союзниксен авиацийĕ София хулине мартăн 30-мĕшĕнче тапăннă чухне хулана питĕ хытă пиншĕ. Бомбăсем пăрахнине пула пушарсем тухнă. Çав вăхăтрах юрлă çил-тăвăл сиксе тухнă. Вăра çав çил-тăвăла пула пушарсем пушшех вăйланса кайнă. Болгари правительстви столицăри тата столица тавра[illegible]шĕнчи 40 километр сывăхĕнчи пунктсенче пурăнакан халăха урăх çĕре куçарса каймалла тунă. Çавна пурнăçа кĕртес тесе, шалти ĕçсен министрĕ панă распоряжени тăрăх, София хулипе ун таврашĕнчи пунктсенче пĕтĕм автотранспорта тата кӳлсе çӳремелли выльăх-чĕрлĕхпе кӳлмелли хатĕрсене пĕтĕмпех мобилизацилеве. Хулара нумай халăх куçса çӳрекен тĕп çулсем çинче эвакуаци пункчĕсем организациленĕ. Урăх çĕре куçарса каякан кашни çынна хăйпе пĕрле алăра тытса пымалли япаласене пĕр вырăнлăх кăна илме ирĕк панă. Хулари халăха урăх çĕре куçарас тĕлĕшпе ĕçлекен управлени çавăн пекех тата уйрăм суту-илӳçĕсен таварĕсене те урăх вырăнсене куçарать.

МЕКСИКĂРИ ТЕЛЕФОНПА ТЕЛЕГРАФ КОМПАНИЙĔН ПУРЛĂХНЕ РЕКВИЗИЦИЛЕНИ

МЕКСИКО, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Республика президенчĕн Авила Камачĕн декретне пичетлесе кăларнă. Декретра Мексикăри телефонпа телеграф компанийĕн пĕтĕм пурлăхне реквизицилесси çинчен каланă. Декрет çав компанире ĕçлекен рабочисемпе служащисен забастовкине пĕтерсе лартать. Забастовка мартăн 13-мĕшĕнче пуçланнă, ку таранччен те чарăнман. Вăл Мексикăри пĕтĕм телефонпа телеграф çыхăнăвне чарса лартнă. Декретра каланă тăрăх, çыхăну ĕçне çав тери нумай вăхăта чарса лартни çĕршыв экономикине пысăк хăрушлăх умне пырса тăратма пултарнă, тăшмана хирĕç тăрса çапăçма тăрăшса ĕçленине самаях кансĕрлĕ пулнă пулĕччĕ.

Мексикăри профсоюзсем тата сенаторсем те чылайĕшĕ президент каланă декрета ырлаççĕ.

Майăн 1-мĕшĕ çинчен тумалли докладсен планĕ

1. Майăн 1-мĕшĕ—фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешекен пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен вăйне пăхса тухмалли кун.
2. Вăрçă тĕпренех Совет Союзĕ майлă улшăнса кайни тата Хĕрлĕ Çарăн 1943—1944 çулхи хĕллехи кампанийĕ.
3. Фронта пĕтĕм халăх пулăшни.
4. Ленин—Сталин партийĕ—фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтерессишĕн кĕрешес ĕçре совет халăхне организацилекен тата хавхалантарса пыракан парти.
5. Гитлера хирĕç кĕрешекен коалици çирĕпленни тата фашистла блок арканни.
6. Пирĕн тулăн вăрçăпа политика тата хуçалăх тĕлĕшĕнчи задачисем.

Литература

1. **Сталин** — Октябрьти социализмлă Аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă доклад.
2. **Сталин** — 1943 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче панă приказ.
3. **Сталин** — 1944 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче панă приказ.
4. **Молотов** — СССР Верховнăй Совечĕн X-мĕш Сессийĕнче тунă доклад.
5. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ пирки йышăннă постановлени.
6. ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XVIII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисем.
7. Совет Информаци Бюровĕн 1944 çулхи мартпа апрель уйăхĕсенчи пĕлтерĕвĕсем.
8. Хаçатсемпе журналсенче пичетленнĕ материалсем.

ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ.

АГРОТЕХНИКА КĔТЕСĔ

Çĕрулмине яровизацилесси

Лартмалли çĕрулмине яровизацилени агротехникăллă паха ĕç пулса тăрать. Яровизациленĕ çĕрулми маларах çитĕнет тата унăн тухăçлăхĕ те чылай ӳсет. Яровизацилесе лартнă çĕрулми пĕр тикĕс те пĕр вăхăтра шăтса тухать. Пирĕн республикăра лартакан «Вольтман» тата «Лорх» йышши çĕрулми кая юлса çитĕнет. Яровизацилени çĕрулмине хăвăртрах çитĕнме пулăшать. Иртерех çитĕннĕ çĕрулмине çантăлăк лайăх тăнă чухне пухса илме май пулать. Çавăнпа та çĕрулмине пĕтĕмпех яровизацилесе лартмалла.

Çĕрулмине çурт-хуралтăра яровизацилеме 35—40 кун кирлĕ. Пирĕн республикăра уйри çĕрулмине май уйăхĕн 15—20-мĕш кунĕсенче лартма пуçлаççĕ, çавăнпа та яровизаци ĕçне, çурт-хуралтăра тăвас пулсан, халех тытăнмалла.

Çĕрулмине яровизацилессин техники йывăр мар. Ăна тĕрлĕ майпа яровизацилеççĕ. Çав майсем, паллах, колхозри условисенчен нумай килеççĕ.

Çĕрулмине пуринчен ытла çурт-хуралтăсенче яровизацилеççĕ. Çав хуралтăсенче çутă çителĕклĕ пулмалла, унта сывлăша уçăлтармалли кантăксем пулмалла тата ăна хутса ăшăтма май пулмалла. Яровизаци тăвакан çурта çĕрулми ытларах вырнаçтарас тесен, çĕрулмине сарса тухма стенасем çумне сӳлĕксем тумалла. Кашни тăваткăл метр вырăна 55—60 килограмм çĕрулми хума пулать. Çакна шута илсе тумалла та ĕнтĕ сӳлĕксене. Сӳлĕксем хушши 25—30 сантиметртан кая пулмалла мар. Вĕсен хĕррине, çĕрулми тăкăнасран 5—7 сантиметр сарлакĕш хăма урлă çапмалла. Çутă çĕрте яровизациленĕ чухне сӳлĕксем çине, урайне, решеткеллĕ ещĕксене 2—3 сий çĕрулми хума юрать. Яровизацилекен çуртра 35—40 кун хушши 10—12 градус ăшă тăмалла. Малтанхи тапхăрта (10 куна яхăн) çĕрулми шăтса çеçкеленме тытăниччен çутă питех кирлĕ мар. Çавăнпа та çак вăхăтра çĕрулми сийне 30—50 сантиметр хулăнăш тума та юрать. 10—15 кун иртсен, çĕрулмине çутă çĕре сӳхе сий туса салатмалла, шпагат е проволук çине тирсе те çакма юрать. Яровизацилекен çĕрулмине кашни кунах сăнаса пăхса тăрас пулать.

Температурăна кулленех висе тăмалла. Çĕрме тытăннă çĕрулмисене е çип-çинсе çеçке кăлараканнисене унтан суйласа илмелле. Çутă вырăнта ещĕксенче яровизациленĕ чухне çĕрулмине кашни 5—6 кунтан (çеçкисем пĕр пек ӳсчĕр тесе) вырăнтан-вырăна сиктерсе лартмалла. Çĕрулми сăмсаланса çеçкине кăларсан, çурта кашни кун 2—3 хутчен уçăлтармалла, çапла туни чĕрĕ сывлăша тасатать тата çĕрулмипе унăн çеçкине чирлесрен сыхлать.

Аялти сӳлĕксем çинче е тĕттĕмрех çĕрте выртакан çĕрулми çеçкисем шурханма тата ытла тăсăлса кайма тытăнсан, вĕсене ерипен çутă сывăхнелле куçарас пулать. Çĕрулми çеçкисем кĕске, патмар тата ешĕл пулмалла. Çакăн пек çеçкесем лартма турттарса кайнă чухне сахалтарах хуçăлаççĕ тата вĕсен аварĕ лайăх пулать.

Ещĕксенче яровизациленĕ чухне çĕрулмине вырăнтан вырăна куçарма тивмест. Аялти ещĕксенчи çĕрулми çеçкисем тăсăлма тытăнсан, вĕсене ещĕкĕпех илсе çиеле, çиелтисене аяла куçарса лартмалла. Уя та вĕсене ещĕкĕпех турттарса каймалла.

Иртерех çитĕнекен çĕрулмине нӳрлĕ пăчкă кĕрпипе, торфпа е çĕрнĕ тислĕкпе витсе яровизацилеççĕ. Ку майпа яровизациленĕ чухне çĕрулмине корзинкăсене, решеткеллĕ ещĕксене хураççĕ, вĕсем çине йĕпетнĕ торф е пăчкă кĕрпи сапаласа хураççĕ, çапла 3—4 сие çити хураççĕ. Çĕрулмипе çĕрулми хушшинчи торфăн е пăчкă кĕрпин хулăнăшĕ 2—3 сантиметр пулмалла. Нӳрлĕ вырăнта яровизациленĕ чухне 15—20 кун хушши 12—15 градус ăшă тăмалла. Çав вăхăтра çĕрулми çеçкисем кăна мар, тымарĕсем те йышлăн тухаççĕ.

Çимелли çĕрулмисен каснă тăррисене нӳрлĕ торф, пăчкă кĕрпи е çĕрнĕ тислĕк сийĕпе витсе яровизацилемелле. Çĕрулми тăррисене каснă енĕпе аялалла тумалла. Çĕрулми тăррине çутă çĕрте яровизацилесен, вăл типсе кайма пултарать.

Çĕрулмине тислĕк купиненче те яровизацилеççĕ. Ăна çапла тăваççĕ. Лаша тислĕкне 20—30 сантиметр хулăнăш сараççĕ, ун çине 3—5 сантиметр хулăнăш çĕр е торф сараççĕ. Çĕр е торф сийĕ çине пĕр сий çĕрулми хураççĕ, тăррисене вара пĕр еннелле туса хураççĕ. Çĕрулми сийĕ çине каллех 3—4 сантиметр хулăнăш нӳрлĕ çĕр е торф хураççĕ, çавăн пек вара çĕрулмине 3 сие çити хума пулать. Çĕрулми юлашки сийĕ çине каллех çĕр е торф хураççĕ, ун çине нӳрлĕ тислĕк 10 сантиметр хулăнăш хума юрать. Çакăн пек купана айккисенчен улампа е тислĕкпе витсе хумалла, улăм е тислĕк сийĕн хулăнăшĕ 10 сантиметр таран пулмалла, улăма е тислĕке 5—10 сантиметр хулăнăш çĕрпе е торфпа витмелле. Çакăн пек купа тĕпĕн сарлакăшне 1,5—2 метр, сӳллĕшне 1 метра çити тусан лайăх. Купан тăрăшшĕ тĕрлĕ пулма пултарать, вăл яровизацилеме хунă çĕрулми мĕн чухлинчен килет. Тислĕк купинче хĕрсе яровизацилевекен çĕрулми 15—17 кунта ĕлкĕрет. Çĕрулмине çакăн пек купара яровизациленĕ чухне унта 12 градусран пуçласа 20 градуса çити ăшă тăмалла. Ăшă мĕнле тăнине сăнама купа ăшне пĕчĕк шăтăк хăвармалла. Унта вара вăхăтран вăхăта термометр лартса пăхмалла. Купара ăшă 20—25 градусран иртет пулсан, ăна айккинчен тата çиелтен витнĕ улăмпа тислĕке сирсе сивĕтмелле. Ăшă 10—12 градусран кая пулсан, çиелтен тата айккинчен тислĕкпе е çĕрпе хулăнрах витмелле.

Çĕрулмине çурт-хуралтăра яровизацилеме май пулмасан, ăна усă çĕртех яровизацилеме пулать. Яровизацилекен вырăна çурçĕр енчи çилсенчен, çавăн пекех тата тӳррĕнех тивекен хĕвел пайăркисенчен хӳтĕлемелле. Çĕрулмине яровизацилеме ăна ик-виçĕ сий хумалла. Çĕрлехи тата ирхи сивĕсем çĕрулмине ан сиенлеччĕр тесе, çĕрле ун çине улăм витмелле е ăна ашăкпа хупламалла.

Çавăн пекех çĕрулмине тарăнах мар шăтăксене те яровизацилеме пулать. Шăтăкăн тарăнăшĕ 20—25 сантиметр, сарлакăшĕ 1,5 метр пулмалла. Çĕрулмине çак шăтăк тĕпне ик-виçĕ сий сарса хумалла. Каç улăмпа е ытти япалапа витсе хумалла. Шăтăкра е усă вырăнта яровизацилессин срокĕ 15—20 куна пырать.

Юлашкинчен çакна калас пулать. Çĕрулмине яровизацилесси питĕ паха та ответлă ĕç пулса тăрать. Çавăнпа та çак ответлă ĕçе тума шанчăклă çынсене уйăрмалла, çак ĕçре кирлĕ инструментсене памалла тата яровизацие мĕнле тумаллишне лайăх пăлхаштармалла.

Р. ОСАНОВ,
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн пахча-çимĕç пайĕн начальникĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, заместительпе секретарĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00592 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.